25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
ФЕВРАЛЬ
5
ЭРНЕКУН
28(6265) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Совет Информаци Бюровӗнчен

Февралӗн 3-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Февралӗн 3-мӗшӗнче **Курскран** ҫурҫӗртерехри районра пирӗн войскӑсем **Золотухино** тата **Возы** ятлӑ чугунҫул станцийӗсене тытса илнӗ, ҫапла вара Курскпа Орел хушшинчи чугунҫула татнӑ.

Украинӑра пирӗн войскӑсем **Красный Лиман** хулипе пысӑк чугунҫул узелне, **Купянск** ятлӑ чугунҫул узелне, **Кременная** хулипе чугунҫул станцине, **Рубежное** хулипе чугунҫул станцине тата **Пролетарск** хулине тытса илнӗ.

Дон ҫинчи Ростовран кӑнтӑртарахра пирӗн войскӑсем вирлӗн тапӑнса пырса **Кущевская** хулипе пысӑк чугунҫул узелне тата **Кагальницкая, Ленинградская, Крыловская** ятлӑ район центрӗсене тытса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче пирӗн войскӑсем малтанхи еннеллех ҫапӑҫса пынӑ.

Баренц тинӗсӗнче пирӗн караписем тӑшманӑн 10.000 тонна водоизмещениллӗ транспортне путарнӑ.

* * *

Февралӗн 2-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине ҫити пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, артиллерин 8 батарейине пусарса лартнӑ, боеприпассен 2 складне сирпӗнтерсе янӑ, тӑшманӑн пехотине пӗр батальона ҫити сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Кӑнтӑр фронтӗнчи войскӑсем тӑшман вӑйлӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе малалла кайнӑ. Н-ски чаҫӑн автоматчикӗсем, 10 танк ҫине ларса, халӑх пурӑнакан пысӑк пункта вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та хаяррӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн ӑна тытса илнӗ. Халӑх пурӑнакан пункт патӗнче тата унӑн урамӗсенче тӑшманӑн ҫӗршер вилли выртса юлнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ тата тыткӑна илнӗ. Тепӗр участокра Н-ски соединени чаҫӗсем халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Нимӗҫсен 3 танкне, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 2 туппине, 27 пулеметне, боеприпассен 3 складне тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ.

* * *

Сватово районӗнче пирӗн чаҫсем халӑх пурӑнакан темиҫе пункта тытса илнӗ. 800 гитлеровеца ҫити вӗлернӗ, нимӗҫсен 5 танкне, 2 бронемашинине тата 24 орудине пӗтерсе тӑкнӑ. 17 оруди, боеприпассен складне, 60 автомашина, 11 радиостанци, тырӑ хывнӑ элеватора тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Пирӗн летчиксем сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 10 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Воронежран хӗвеланӑҫнерехе пирӗн войскӑсем малалла тапӑнса пынӑ. Горшечная станцинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре совет чаҫӗсем тӑшманӑн ҫавӑрса илнӗ группине пӗтерсе тӑкнӑ. 600 ҫынна тыткӑна илнӗ. 100 автомашина, 20 мотоцикл, 300 лаша, 200 лав тата тӗрлӗ хӗҫпӑшалсем нумай тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн подразделенисем тӑшманӑн контратакине сирсе янӑ, унтан каялла чакакан гитлеровецсене хӑваласа пырса, тӑшманӑн 400 салтакӗпе офицерне ытла петерсе тӑкнӑ. 650 ҫынна тыткӑна илнӗ.

* * *

Ҫурҫӗр Кавказ фронтӗнчи войскӑсем малалла тапӑнса пынӑ. Н-ски соединенин чаҫӗсем малалла куҫса пырса, нимӗҫ пехотин батальонне тата утлӑ ҫарӗн эскадронне аркатса тӑкнӑ. 4 танк, 15 оруди, 21 пулемет, 11 противотанковӑй пӑшал, унтан гитлеровецсем выртӑнти халӑхран ҫаратса илнӗ пурлӑха тата боеприпассем тиенӗ 22 автомашинӑна тытса илнӗ. Тепӗр уастокра совет кавалерисчӗсем нимӗҫсене халӑх пурӑнакан икӗ пысӑк пунктран хӑваласа кӑларнӑ тата трофейӑсем нумай тытса илнӗ.

* *

Ҫак кунсенче Центральнаи фронтӑн пӗр участокӗнче полковник Курсаков ертсе пыракан кавалери группи ҫапӑҫса пырса тӑшман тылӗнчен тухнӑ. Ноябрь вӗҫӗнче тӑшманӑн тылне кӗрсе кайса, ҫав группа пӗр паха чугунҫула тытса илнӗ, ҫав ҫул тӑрӑх ҫӳреме паман ӑна вӑл темиҫе кун хушши хӑйӗн аллинчен вӗҫертмесӗр тытса тӑнӑ Каярахпа, командовани хушнӑ тӑрӑх, ҫав группа тӑшманӑн тылне нумай шала кӗрсе кайнӑ та тылри гарнизонсене аркатса ҫӳренӗ. кӗперсене тата чугунҫулсене сирпӗнтере-сирпӗнтере янӑ, ҫыхӑну хатӗрӗсене пӑсса ҫӳренӗ, ҫапла вӑл тӑшманӑн тылне тӗрлӗ майпа йӗркерен кӑларса пынӑ.

Тӑшманӑн тылне кӗрсе кайнӑ чухне тата унӑн тылӗ тӑрӑх 40 кун хушши ҫӳренӗ вӑхӑтра пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче кавалери группи 6 самолета, 40 танка ытла, 46 орудие, 40 станковӑй тата ручной пулемета, 300 автомашинӑпа мотоцикла тата ытти тӗрлӗ ҫар материалӗсене нумай пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинчех вӑл нимӗҫсен 8 гарнизонне аркатса тӑкнӑ, тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 4.000 ҫынна ҫити вӗлернӗ.

Командовани хушнӑ тӑрӑх ҫав группа халь тӑшманӑн тылӗнчен тухса Хӗрлӗ Ҫарӑн чаҫӗсемпе пӗрлешнӗ.

* *

Январь уйӑхӗн вӗҫӗнче нимӗҫсем Ленинград облаҫӗнчи партизансене хирӗҫ карательнӑй экспедици янӑ. Совет патриочӗсем тӑшманӑн шухӑшне вӑхӑтра пӗлнӗ те гитлеровецсене хӑйсем атакӑланӑ, вӗсене пысӑк ҫухату тӳстернӗ. Тепӗр отрядри партизансем тӑшманӑн войскӑсемпе ҫар техники турттарса пыракан поездне ӳпантерсе янӑ.

Февралӗн 4-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Февралӗн 4-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем малтанхи еннеллех наступлениллӗ ҫапӑҫусем туса пынӑ.

* * *

Пирӗн войскӑсем Дон ҫинчи Ростовран кӑнтӑртарахра тӑшман вӑйлӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе тата унӑн контратакисене сире-сире ярса, малалла наступлени туса пынӑ. Кущевская районӗнче Н-ски часть нимӗҫ мотопехотине пӗр батальона ҫити аркатса тӑкнӑ, тӑшманӑн 10 танкне пӗтерсе хунӑ. Тепӗр участокра нимӗҫ автоматчикӗсен группи танксем пулӑшса пынипе пирӗн подразделенисен ҫапӑҫу ретӗсене татса тухма хӑтланнӑ. Пирӗн боецсем пӑшалсемпе тата пулеметсемпе персе 100 нимӗҫ автоматчикне ҫити вӗлернӗ, противотанковӑй пӑшалпа персе тӑшманӑн 2 танкне вут тивертнӗ.

* * *

Пирӗн войскӑсем Красный Лиман районӗнче малалла тапӑнса пынӑ. Н-ски содинении чаҫӗсем хаяррӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн халӑх пурӑнакан 6 пункта, тӑшман вӑйлӑ тӗреклетнӗскерсене, тытса илнӗ. Халӑх пурӑнакан ҫав пунктсенчен пӗриншӗн пынӑ ҫапӑҫура кӑна нимӗҫсен 300 салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, 4 танка, 7 танкеткӑна, 3 бронемашинӑна персе ҫӗмӗрнӗ, темиҫе оруди тытса илнӗ.

* * *

Воронежран хӗвеланӑҫнерехре Н-ски часть нимӗҫсене халӑх пурӑнакан 2 пысӑк пунктран хӗссе кӑларнӑ. Боецсем 5 оруди, 12 пулемет, 2 миномет, радиостанци тата артиллери складне тытса илнӗ. Пӗр участокра Зольвич лейтенант ертсе пыракан автоматчиксем тӑшманӑн пӗр 600 ҫынтан тӑракан колонни ҫине пенӗ, ҫав колонна Алексеевка ятлӑ халӑх пурӑнакан пункт патнелле пынӑ. Гитлеровецсем каялла кайнӑ та тепӗр ял патнелле сулӑннӑ. Вӗсем ҫав ял патне пырса ҫитсен, пирӗн боецсен тепӗр ушкӑнӗ нимӗҫсене пулеметран пеме тытӑннӑ. Гитлеровецсем хӑраса ӳксе ҫухалсах кайнӑ. Кӗске вӑхӑт хушши ҫапӑҫсан, пирӗн боецсем тӑшманӑн 300 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

* * *

Крымра кӗрешекен партизансен отрячӗ икӗ уйӑх хушши ҫапӑҫса тӑшманӑн 200 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Совет патриочӗсем 4 грузовой автомашинӑна ҫӗмӗрнӗ тата нимӗҫсен пӗр эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Пӗр паровоз, салтаксем ларса пыракан 4 теплушка тата тӗрлӗ ҫар техники тиенӗ 19 платформа ҫӗмӗрӗлнӗ, Украинӑра кӗрешекен партизансен отрячӗ январь варринче тӑшманӑн ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Паровоз тата боеприпассем тиенӗ 16 вагон ҫӗмӗрӗлнӗ. Кунсӑр пуҫне ҫав эшелонӑн хуралне пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Аяларахра Ростов облаҫӗнчи Сальск хулинче нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем тискер ӗҫсем туни ҫинчен ҫырнӑ акта пичетлетпӗр: „Гитлерла бандитсемпе ҫынвӗлеренсем Сальск урамӗсене юнпа шӑварнӑ, пирӗн хулана ҫаратнӑ. Фашистла ҫынҫиенсем кӳллен вуншар мирлӗ ҫынна персе вӗлернӗ. 1-мӗш номерлӗ кирпӗч завочӗ патӗнче персе вӗлернисен виллисемпе тултарнӑ 30 шӑтӑка тупнӑ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, нимӗҫсем хулари мирлӗ ҫынсене 3.000 ҫынна ытла асаплантарса вӗлернӗ. Фашистла палачсем Дубинская врача, депо слесарьне Ганина, колхоз председательне Глазкона, тата ҫӗлекене Филоненкона, ача сачӗн бухгалтерне Руднева тата унӑн 80 ҫулхи амӑшне, Бойко гражданкӑна тата унӑн икӗ ҫамрӑк ачине тата ытти нумай ҫынсене персе вӗлернӗ. Кунсӑр пуҫне, хулара тыткӑна лекнӗ красноармеецсемпе командирсен, асаплантарса вӗлернӗскерсен, виллисене тупнӑ. Хуларан каялла чакнӑ чухне фашистла бандитсем поликлиникӑна, 2 больницӑна, 5 шкула, вокзала, электростанцие, железнодорожниксен клубне тата пурӑнакан нумай ҫуртта ҫунтарса янӑ. Хӗрлӗ Ҫар пырса кӗни кӑна хулана пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкасран ҫӑлса хӑварнӑ". Акта ӗҫҫынни депутачӗсен Сальск хула совечӗн исполкомӗн председателӗ Д. Шостерко, врач Е. Лекаркина, учительница Е. Узлова, колхозница Рева, рабочи Донцов, служащи Проскурин, килхуҫи хӗрарӑмӗ Е. Щедлова тата колхозник Сыткин алӑ пуснӑ.

Январӗн 30-мӗшӗнче Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронта чехословаксен ҫар чаҫӗ кайнӑ. Ӑна гитлерла Германия Совет Союзне ултавлӑн тапӑннӑ чухне Совет Союзӗнче пурӑннӑ Чехословаки гражданӗсенчен пухса тунӑ. Чехословаки ҫар чаҫне полковник Свобода ертсе пырать.

Хӗрлӗ Ҫар уявне тивӗҫлипе кӗтсе илессишӗн

Чӑвашпотребсоюз системинчи работниксем Хӗрлӗ Ҫар 25 ҫул тултарнӑ ятпа пыракан ӑмӑртӑва хутшӑнчӗҫ. Ҫак ӑмӑртура вӗсем 1943 ҫулӑн пӗрремӗш кварталӗнчи таварҫаврӑнӑш планне Хӗрлӗ Ҫар кунӗ тӗлне 70 процент тултарма, выртӑнти промышленность таварӗсене 2 миллион тенкӗлӗх сутма, харпӑрхӑй предприятисенче туса кӑларнӑ куллен кирлӗ таварсене 200.000 тенкӗлӗх сутма, спецзадани планне 10 процент чухлӗ ӳстерсе тултарма, Хӗрлӗ Ҫар кунӗ тӗлне планран ирттерсе 10 тонна пахча-ҫимӗҫ, пӗр тонна кайӑк-кӗшӗк хатӗрлеме, тимӗр-тӑмӑр пухмалли пӗрремӗш кварталти плана февралӗн 23-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмӗшпех тултарма, пай укҫине планран ирттерсе 500.000 тенкӗ пухма тата ытти ӗҫсене те тума пулчӗҫ.

Илнӗ обязательствӑсене пӗтӗмӗшпех пурнӑҫа кӗртессишӗн Чӑвашпотребсоюз системинчи работниксем Тутар республикинчи потребкооперации работникӗсемпе ӑмӑртаҫҫӗ. Халӗ пирӗн республикӑри суту-илӳ, пӗрлешӳллӗ апатлану тата хатӗрлев организаци работникӗсен ӑмӑртӑвӗ сарӑлса пырать. Ҫак ӑмӑртура чылай райпотребсоюзсем хӑйсен ӗҫӗсене хӑвӑртлатса пыраҫҫӗ, таварҫаврӑнӑш планне срокчен тултарассишӗн кӗрешеҫҫӗ. 1943 ҫулӑн пӗрремӗш кварталӗнчи таварҫаврӑнӑш планне январь уйӑхӗн малтанхи вунпиллӗк кунӗ хушшинче Ишлей районӗнчи потребсоюз (председателӗ Ильин)—32,3 процент, Сӗнтӗр райпотребсоюзӗ (председателӗ Харитонов) — 31,7 процент, Куславкка райпотребсоюзӗ (Кузьмин)—32,1 процент, Шупашкар райпотребсоюзӗ (Гагарин)—25,8 процент тата Вӑрмар райпотребсоюзӗ (Федоров) — 21,3 процент тултарнӑ. Чӑвашпотребсоюз системи таварҫаврӑнӑш планне 20,8 процент тултарнӑ.

И. Данилов.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

I.

Воронежран хӗвеланӑҫнерехре пирӗннисем тытса илнӗ трофейӑсем тата противникӑн ҫухатӑвӗсем

Совинформбюро январӗн 30-мӗшӗнче пӗлтерничен пирӗн войскӑсем январӗн 27—29-мӗшӗсенчи ҫапӑҫусенче Воронежран хӗвеланӑҫнерехре противникӑн пысӑк группине ҫавӑрса илни паллӑ пулнӑччӗ. Юлашки кунсем хушшинче пирӗн чаҫсем противникӑн ҫав группине пайӑн-пайӑн татса уйӑрнӑ та халӗ пӗтерсе пыраҫҫӗ. Противникӑн ҫавӑрса илнӗ чаҫӗсем пирӗн войскӑсен ункине татса тухма хӑтланнисем пурте путланса ларнӑ. Январӗн 30-мӗшӗпе февралӗн 4-мӗшӗ хушшинчи ҫапӑҫусенче пирӗн войскӑсем противникӑн ҫавӑрса илнӗ группировкин составӗнчен 5.000 ытла салтакпа офицера пӗтерсе тӑкнӑ тата 13.000 салтакпа офицера тыткӑна илнӗ. Ҫапла вара, пирӗн войскӑсем Воронежран хӗвеланӑҫнерехре наступлени тунӑ хушӑра, январӗн 27-мӗшӗнчен пуҫласа февралӗн 4-мӗшне ҫитиччен, противникӑнне пурӗ 27.000 салтакпа офицера тыткӑна илнӗ.

Февралӗн 3-мӗшӗнче венгерсен 3-мӗш армейски корпусӗн командирне **ШТОММ** генерал-майора, ҫав корпусри артиллери начальникне **ДЕШИНА**, корпус штабӗн оперативнӑй отдел начальникне генеральнӑй штабӑн майорне **ЧАТОНА** тыткӑна илнӗ.

Январӗн 27-мӗшӗпе февралӗн 4-мӗшӗ хушшинчи ҫапӑҫусенче фронтӑн ҫав участокӗнче пирӗн войскӑсем, малтанлӑха палӑртнӑ тӑрӑх, ҫакӑн пек трофейӑсем **ТЫТСА ИЛНӖ**: танксем — 143, тӗрлӗ калибрлӑ орудисем — 516, минометсем — 149, пулеметсем — 582, винтовкӑсем—12.000, снарядсем — 310.000, патронсем — 400.000, радиостанцисем — 64, автомашинӑсем — 2.361, мотоциклсем — 447, чугунҫул эшелонӗсем — 32, тӗрлӗ складсем — 122.

Ҫав вӑхӑт хушшинчех противникӑн, вилнисене кӑна шутласан та, 17.000 салтакӗпе офицерӗ пӗтнӗ.

II.

Пирӗн войскӑсем Купянск, Щигры, Тим хулисене йышӑнса илнӗ

Украинӑра пирӗн войскӑсем, татӑклӑ атака тунӑ хыҫҫӑн, **КУПЯНСК** хулине йышӑнса илнӗ.

Курскран хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн войскӑсем **ЩИГРЫ** хулипе чугунҫул станцине тата **ТИМ** хулине йышӑнса илнӗ.

СОВИНФОРМБЮРО.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

И. В. СТАЛИН юлташа

Паттӑр Хӗрлӗ Ҫар отечественнӑй вӑрҫӑн фрончӗсенче тунӑ чаплӑ ҫитӗнӳсемпе тата вӑл Ленинграда тӑшман хупӑрласа тӑнине татса пӑрахнипе хавхаланса, Ленинградри рабочисем, работницӑсем, инженерла-техникла работниксем, служащисем, врачсем, учительсем, литературӑпа искусство работникӗсем, килхуҫи хӗрарӑмӗсем, пенсионерсем, пионерсем тата шкулта вӗренекенсем танксен „Ленинградец" ятлӑ колоннине, самолетсен „Ленинград" ятлӑ соединенине тата артиллери тума хӑйсен перекетлесе хӑварнӑ укҫисенчен 74.500.000 тенкӗ пухса пачӗҫ.

Укҫа пухни Ленинград ҫыннисем Тӑван ҫӗршыва, большевиксен партине тата Сире, Сталин юлташ, вӗҫӗ-хӗррисӗр парӑннине вӑйлӑн кӑтартса пачӗ. Ленинградри ӗҫҫыннисем хӑйсен хулине хӳтӗлесе тӑрса, хӑйсене тӑшман хупӑрласа илнин мӗнпур йывӑрлӑхӗсене вӗсем Тӑван ҫӗршыв вӑйлӑн пулӑшса тӑнипе тӳссе ирттерчӗҫ. Эсир Ленинградшӑн тӑрӑшнипе хавхаланса, Ленинград ҫыннисем Ленинград патӗнче фашистла кӗтӳсене ҫӗнтерес кун килессине хытӑ ӗненсе тӑчӗҫ. Тӑшман хупӑрласа илнӗ унка татса пӑрахни пирӗн вӑйсене ӳстерет, гитлерла ирсӗрсемпе вӑрӑ-хурахсене пӗтӗмпех аркатса тӑкмашкӑн фронта тата ытларах пулӑшма пире мобилизацилет.

Эсир, хаклӑ учитель тата тусӑмӑр, Ленинград ҫыннисем Сире хӗрӳллӗн саламланине тата Сире сывлӑхпа нумай ҫул пурӑнма суннине йышӑнӑр.

ВКП(б) Ленинград Горкомӗн Секретарӗ А. ЖДАНОВ.

Ленинград хули

ВКП(б) Ленинград Горкомӗн секретарьне ЖДАНОВ юлташа

Ленинград хулинчи рабочисене, работницӑсене, инженерла-техникла работниксене, служащисене, врачсене, учительсене, литературӑпа искусство работникӗсене, килхуҫи хӗрарӑмӗсене, пенсионерсене, пионерсене тата шкул ачисене, танксен „Ленинградец" ятлӑ колоннине, самолетсен „Ленинград" ятлӑ соединенине тата артиллери тума 74.500 пин тенкӗ укҫа пухнӑскерсене,—манран тӑванла салам калӑр тата Хӗрлӗ Ҫар ячӗпе тав тӑвӑр.

И. СТАЛИН.

Выранти удобренисем хатӗрлемелли уйӑхлӑхӑн итогӗсем

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн XIII-мӗш пленумӗ ҫӗре ҫемҫетес ыйтӑва пысӑк вырӑна хурса республикӑри колхозсенче ку тӗлӗшпе январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа уйӑхлӑх туса ирттерме йышӑнчӗ. Пленум решенине пурнӑҫа кӗртсе пырса, вырӑнти удобренисене пуҫтарса хатӗрлемелли уйӑхлӑха нумай колхозсем активлӑн хутшӑнчӗҫ.

Уйӑхлӑх организацилени ҫак ӗҫе тӗпренех вӑйлатрӗ. Республикӑри виҫӗ район уйӑхлӑхӑн планне ирттерсе тултарчӗҫ. Вӗсем — Вӑрнар, Етӗрне, Чкаловски районсем. Етӗрне районӗн уйӑх хушшинче уя 17.390 тонна тислӗк кӑлармалла пулсан, кунти колхозсем ҫак хушӑра хӑйсен уйхирне 19.443 тонна тислӗк кӑларчӗҫ.

Ҫӗре ҫемҫетес тӗлӗшпе Вӑрнар районӗ пуриншӗн те пример пулса тӑрать. Вӑрнар районӗнчи колхозсем иртнӗ 1942 ҫулта та республикӑра пуринчен те пысӑкрах тухӑҫлӑ тырпул туса илекенсем пулчӗҫ. Кӑҫал та районри колхозсем тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ. Район иртнӗ ҫулти кӗркунне уя тислӗк кӑларас ӗҫе анлӑн туса пычӗ, халӗ те ҫак ӗҫ лайӑх пырать. Ӳйхире тислӗк кӑлармалли ҫулталӑк планне район 67,1 процент пурнӑҫланӑ. Уйӑхлӑх хушшинче районри пур колхозсем те ҫӗнерен пысӑк ҫитӗнӳ турӗҫ. Тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн большевикла ӗҫлеме пӗлнине кӑтартса пачӗҫ. Уйӑх хушшинче районри колхозсем хӑйсен уйхирӗсене хывма ҫӗнерен 37.615 тонна тислӗк кӑларчӗҫ, ҫапла Вӑрнар районӗнчи колхозсем уйӑхлӑхра планран ирттерсе 12.245 тонна тислӗк кӑларнӑ. Уйӑхлӑхӑн ултӑмӗш пилӗккунлӑхӗн планне район 243 процент пурнӑҫланӑ. Ҫӗршывпа Хӗрлӗ Ҫара 1943 ҫулта ытларах тырӑ туса парассишӗн Вӑрнар районӗнчи колхозсем ҫакӑн пек кӗрешеҫҫӗ ӗнтӗ.

Анчах, калас пулать, хӑшпӗр районсенче выранти удобренисем пухас ӗҫ халӗ те тивӗҫлӗ выранта мар-ха. ВКП(б) Обкомӗн XIII-мӗш пленумӗн кӑтартӑвӗсене Шупашкар, Хӗрлӗ Чутай, Элӗк, Куславкка, Ҫӗмӗрле районӗсенчи чылай колхозсем япӑх пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Ку районсенчи партипе совет организацийӗсем тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерес ӗҫпе кирлӗ таран интереслӗнмеҫҫӗ.

Уйхире тислӗк кӑларас ӗҫ, пӗтӗмӗшпе илсен, уйрӑмах Шупашкар, Хӗрлӗ Чутай, Элӗк, Куславкка районӗсенче япӑх пулса пырать. Ҫу районсенче иртнӗ кӗркунне те уя тислӗк сахал кӑларнӑ. Шупашкар районӗнчи колхозсем уйӑхлӑх планне пурнӑҫламарӗҫ. Элӗк районӗ уя 24.300 тонна тислӗк кӑларас вырӑнне 6.271 тонна ҫеҫ кӑларнӑ. Пуринчен те кайри выранта вара Куславкка районӗ тӑрать.

Ку районсем тислӗк кӑлармалли ҫулталӑк планне 8—10 процент ҫеҫ пурнӑҫланӑ. Тӗслӗхрен, Шупашкар районӗ уя тислӗк кӑлармалли ҫулталӑкри плана 4,6 процент ҫеҫ пурнӑҫа кӗртнӗ.

Ҫавӑн пекех выранти удобренисене пухса хатӗрлес ӗҫ Первомайски, Шӑмӑршӑ, Ишлей тата ытти хӑшпӗр районсенче те сителӗксӗр пулса пырать.

РЕСПУБЛИКАРИ МТС-сем ТРАКТОРСЕНЕ ЮСАМАЛЛИ ҪУЛТАЛАКРИ ПЛАНА ФЕВРАЛӖН 1-МӖШӖ ТӖЛНЕ МӖНЛЕ ПУРНАҪЛАНИНЕ КАТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

МТС-сем	Капитальнӑй ремонт	Текущи ремонт	Пурӗ ремонтланӑ
Елчӗк	90	86,6	88
Элӗк	78,5	90,4	85,7
Ишлей	78,9	79,1	79
Шӑхасан	37,5	104,3	76,9
Канаш	88,8	60,0	70,8
Шупашкар	53,8	80,9	70,5
Йӗпреҫ	70	66,6	67,7
Етӗрне	53,8	76,1	67,6
Кувакино	60	72,4	67,3
Комсомольски	60	69,1	65,1
Ҫӗмӗрле	50	68,7	62,5
Пӑрачкав	68,1	54,5	60
Первомайски	42,8	66,6	59
Вӑрмар	52,9	62,9	59
Куславкка	42,8	60,8	58,9
Чкаловски	71,4	52	58,9
Вӑрнар	61,1	55,1	57,4
Хӗрлӗ Чутай	87,5	40	56,5
Красноармейски	64,7	50	56
Тӑвай	57,1	52,1	54,0
Сӗрпӳ	50	55,5	53,3
Ҫӗнтӗр	40	56,5	50
Шӑмӑршӑ	58,3	44,4	50
Сӗнтӗрвӑрри	42,8	46,1	45
Улатӑр	25	46,1	38
ЧАССР тӑрӑх	59,8	64,6	62,7
Январӗн 25-мӗшӗ тӗлне пулнӑ	53,5	58,1	56,4

Хӗрлӗ Ҫарӑн сӗнтерӗвӗсемпе хавхаланса

СОВЕТСКОЕ. Турай ялсоветӗнчи «Урожай» тата «Металлист» колхозсем ҫуракине тӗплӗн хатӗрленеҫҫӗ. «Металлист» колхоз вӑрлӑхсене хатӗрлесе ҫитернӗ, 100 центнер сӗлӗ, вика, тулӑ тата ытти культурӑсене те сортланӑ. Уя 600 лав тислӗк кӑларнӑ, 30 гектар ҫинче юр тытса хӑварнӑ. Январь уйӑхӗнче колхозниксем 30 центнер кӗл, 10 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнӑ, 20 центнер фосфорит ҫӑнӑхӗ турттарса килнӗ.

Ялхуҫалӑх машинисене тата ут таврашӗсене пурне те юсанӑ тата ҫӗнӗрен туса хатӗрленӗ.

«Урожай» колхоз та (председателӗ Ф. Андреев—фронтран аманса таврӑннӑ юлташ) государство умӗнчи кӑҫалхи обязательствӑсене срокчен пурнӑҫланӑ, Хӗрлӗ Ҫар фондне 4,24 центнер какай, 40 центнер ытла ыраш хывнӑ.

Халӗ колхозниксем Хӗрлӗ Ҫар 25 ҫул тултарнӑ куна ҫуракине пуренӗпе те хатӗрленсе ҫитмешкӗн тӑрӑшса ӗслеҫҫӗ.

М. Степанова.

* * *

Ҫӗмӗрле районӗнчи чылай колхозсем Хӗрлӗ Ҫар 25 ҫул тултарнӑ уява государство умӗнчи 1943 ҫулхи обязательствӑсене срокчен татнипе кӗтсе илеҫҫӗ. «Полярная звезда» колхоз, акӑ, государствӑна 1943 ҫулшӑн аш-какай парса татрӗ. Колхозниксем те хӑйсен обязательствисене срокчен пурнӑҫлаҫҫӗ. Куприянова, Викторова колхозниксем 1943 ҫулшӑн 40-шер килограмм аш-какай пачӗҫ.

Х. Лисин.

Паттăр воинсем патне—паха парнесем

КАНАШ, февралĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕçсыннисем, рабочисемпе колхозниксем, Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа фронтри боецсем патне паха парнесем яраççĕ. Паянхи куна колхозниксем, рабочисем тата служащисем боецсем патне яма çакăн пек продуктсем пухса панă: 1.122 килограмм какай, 1.375 килограмм тулă çăнăхĕ (унтан булкăсем туса хатĕрленĕ), 94 килограмм пыл, 30 килограмм сарă çу, 80 килограмм махорка, 250 литр эрех тата ытти те.

Доронин ячĕпе тăракан колхоз боецсем патне 80 килограмм какай, 30 килограмм пыл, 5 килограмм çу тата ытти тĕрлĕ çимĕçсем ярать.

Л. Знаменская,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Колхозниксем паттăр Хĕрлĕ Çар вăрçă фронтĕнче пысăк çĕнтерӳ тунипе хавхаланса, фронта пулăшас ĕçе вăйлатса пыраççĕ. Кашни колхоз халь Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă кун тĕлне фронтри боецсем патне яма паха парнесем хатĕрлет.

Егоркинăри «Большевик» колхоз членĕсем боецсем патне 252 килограмм какай, 100 килограмм кĕрпе, 10 килограмм махорка тата 49 килограмм типĕтнĕ çĕрулми яраççĕ. Ку продуктсене халь пĕтĕмĕшпех пухса çитернĕ, çак кунсенчех вĕсене ещĕксене хурса фронта ăсатаççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхозра та Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем хатĕрлес ĕç хĕрӳллĕн пырать. Халь колхозниксем 96 килограмм какай, 440 килограмм çĕрулми, 70 килограмм купăста типĕтсе пачĕç.

Предприятисемпе учрежденисенчи рабочисемпе служащисем те боецсем патне парнесем яраççĕ. Мехлесопункт коллективĕ кăна боецсем патне 40 уйрăм посылка ярать. Вĕсенче премĕксем, эрех, табак тата ытти парнесем. «Большевик» заводра ĕçлекен рабочисем те боецсем патне яма хĕрĕх посылка хатĕрленĕ.

Х. Лисин.

* * *

ШАМАРША, февралĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозниксем, предприятисемпе учрежденисенчи рабочисемпе служащисем фронтри боецсем патне Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа 404 посылка ячĕç. Ĕнер вăл посылкăсене 12 лавпа Канаш хулине леçрĕç. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса пыракан паттăр воинсем патне яма 104 килограмм пыл, 75 килограмм çу, 78 килограмм махорка, 2.225 çăмарта, 410 килограмм аш-какай, 2.000 килограмм шурă çăнăх, 300 килограмм ытла тĕрлĕрен кĕрпе пачĕç.

Боецсем патне посылкăсем ярас тĕлĕшпе уйрăмах красноармеецсемпе командирсен арăмĕсен райвоенкомат çумĕнчи организацийĕ, районри больница коллективĕ, райлесзаг, райпищекомбинат, коллективĕсем, колхозсем паха ĕçлерĕç.

Колхозсем хатĕрленĕ посылкăсенче—ăшă кăмăлпа вырнаçтарса хунă пыл, ăшаланă чăх, ăшаласа пĕçернĕ аш, колхозницăсем хăйсем пĕçернĕ булкăсем тата эрех пур. «Юлташ» колхоз çавăн пек посылкăсене пурĕ 27 туса ячĕ. Кашни посылкăнах колхозниксем çĕршыв ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн юна шеллемесĕр çапăçакан паттăр боеца чĕререн тав туса, сывлăхлă пулса тăшмана малашне те вутлăн-хĕмлĕн çĕмĕрсе пыма сĕнсе çыру хучĕç.

Б. Вислобоков.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Центральнăй фронт). Ӳкерчĕк çинче: Йĕлтĕрçĕсен отрячĕ касхи маршра.
Ф. КИСЛОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Фронт ыйтнă пек ĕçлетпĕр

Фронтпа тыл хушшинчи пĕрлĕх, тăванла çыхăну куллен ӳссе, çирĕпленсе пырать. Фронтри туссем тылри ĕççыннисем патне янă çырусенче Хĕрлĕ Çара вăйлăнрах пулăшма, ирсĕр тăшмана совет çĕрĕ çинчен тасатма мĕн кирлине йăлтах туса пама чĕнеççĕ. Тылри патриотсем вĕсене пархатарлă ĕçĕсем çинчен пĕлтереççĕ. Верховный Главнокомандующи Сталин юлташăн приказне пурнăçланă çĕрте фронт — тыла, тыл — фронта пĕр-пĕрне пулăшса, хавхалантарса пыраççĕ.

Çак кунсенче Шăхасан районĕнчи Анат-Сурăмри «Красное Сормово» колхоз членĕсем отечественнăй аслă вăрçă фронтĕнче çапăçакан хăйсен землякĕ — старши лейтенант Константин Михайлович Кольцов юлташăн çырăвне илсе пĕрле пухăнса вуларĕç. Колхозниксем Кольцов юлташ патне ответлă çыру ячĕç. Аяларахра вĕсен çырăвне пичетлетпĕр.

Юратнă Константин Михайлович!

Чи малтанах сана, пирĕн хаклă земляк, чĕререн тав туса тăванла салам яратпăр, фронтра чаплă ĕçсем тума сывлăхпа телей сунатпăр. Эпир санăн çырăва колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче вуларăмăр.

Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем çинчен тата эсĕ, Константин Михайлович, нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç хаяррăн çапăçни çинчен пĕлсен, эпир сана хамăрăн ĕçсем пирки хыпар парас терĕмĕр.

Пирĕн чĕресенче яланах пĕр ĕмĕт, пĕр шухăш, пĕр тĕллев çунса тăрать — вăл Хĕрлĕ Çара пулăшассишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлесси. Эпир эсĕ хушнă пек, фронт ыйтнă пек ĕçлесшĕн тăрăшатпăр. 1943 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕмĕр, тырпулсене вăхăтра пуçтарса кĕртрĕмĕр. Государство умĕнчи обязательствăсене татрăмăр. Халĕ хĕрсех çитес çулхи çуракине хатĕрленетпĕр. Плугсене, транспорт инвентарĕсене юсатпăр, вăрлăхсене сортлатпăр, удобренисем хатĕрлетпĕр. Январĕн 1-мĕшĕпе февралĕн 1-мĕшĕ хушшинче пирĕн Чăваш республикинче вырăнти удобренисене хатĕрлес тĕлĕшпе уйăхлăх пулса иртрĕ. Çак уйăхлăх вăхăтĕнче эпир уя 1.050 лав тислĕк кăлартăмăр, 45 центнер кĕл, 20 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлерĕмĕр.

Сталин юлташăн историллĕ докладĕпе приказĕ çине ответлесе, эпир фронта мĕнпур майсемпе пулăшса тăратпăр. Хамăрăн хуçалăхри 864 пăт тырра Хĕрлĕ Çар фондне патăмăр. Танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» колоннисене тума 34.000 тенкĕ укça пухса хыврăмăр. Колхоз председателĕ Виссарионов — 3.000 тенкĕ, бригадирсем А. Николаева — 1.500 тенкĕ, А. Петрова — 1.500 тенкĕ, кладовщица Комарова — 1.500 тенкĕ, ферма заведующийĕ Павлов — 3.000 тенкĕ пачĕç. Кунсăр пуçне Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем чылай хатĕрлесе патăмăр.

Хаклă Константин Михайлович, кĕрешӳре çирĕп пул, паттăр пул, ирсĕр тăшмана пĕр хĕрхенмесĕр аркатса пыр! Эпир Сире, Хĕрлĕ Çар воинĕсене, ĕçлĕн пулăшса тăрăпăр. Нимĕç оккупанчĕсене — вилĕм! Çĕнтерсе тавăрăн!

Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ хушнипе:

Колхоз председателĕ **Н. Виссарионов**, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ **И. Иванов**, счетовод **С. Вершинина**, колхозниксем **С. Степанов, А. Агаков, А. Петрова, Комарова, Игнатьева, Иванова.**

ÇĔНĔ ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕМ ИЛЧĔÇ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, комбинат коллективĕ январь уйăхĕнче хăйĕн заданине 101,2 процент тултарчĕ. Январь уйăхĕнче уйрăмах Абущахмин юлташ ертсе пыракан цех лайăх ĕçлерĕ, вăл уйăхри плана 124,6 процент тултарчĕ.

Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн приказĕпе паллашнă хыççăн рабочисем татах та тухăçлăрах ĕçлеме пулчĕç. Назаров юлташ ертсе пыракан цех коллективĕ февраль уйăхĕнчи плана февралĕн 25-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех тултарма пулчĕ. Абушахмин тата Павлов ертсе пыракан цехсем те уйăхри плана срокчен тултарма пулчĕç. Уйрăм рабочисем—Астахов, Швецов, Клюев юлташсем хăйсен нормисене 150 процентран кая мар тултарса пыма, Киселев, Краснощеков, Волков юлташсем 200-шер процент тултарса пыма пулчĕç. Ĕнер вĕсем хăйсен нормисене 250—290 процент тултарчĕç.

„Марс“ колхозри агитаторсем

ЕЛЧĔК. (Хамăр корр.). Партипе комсомолăн «Марс» колхозри пуçламĕш организацисенчи коммунистсемпе комсомолецсем масса хушшинче агитациллĕ ĕçе аван туса пыраççĕ. Пуçламĕш парти организацийĕ 12 çынтан агитколлектив организациленĕ. Унти агитаторсене кашни бригадăна вичшер çын уйăрса çирĕплетнĕ.

Агитаторсем агитаци ĕçне чĕререн юратса туса пыраççĕ. Чи лайăх агитатор — Хабир Ганеев. Вăл ĕçлекен бригада уборка вăхăтĕнче те малта пынă, халĕ те малта пырать. Хабир Ганеев колхозниксем хушшинче 89 хут калаçусем туса ирттернĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсен паттăр ĕçĕсем çинчен ăнлантарса, вăл колхозниксене танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума укça пухма мобилизациленĕ. Çапла вара пĕрремĕш бригадăри колхозниксемпе колхозницăсем танксем тума кĕске вăхăт хушшинчех 95.875 тенкĕ пухнă. Кунсăр пуçне, Ганеев юлташ оборона фондне хăй 18 пăт, Т. Динмухаметова, Ш. Ахмедзянов юлташсем 6-шар пăт, С. Калиев 18 пăт тырă хывнă. Бригада çуракине пур енĕпе те хатĕрленсе çитнĕ.

Тепĕр лайăх агитатор — Гарифуллин юлташ, вăл ялсовет исполкомĕн председателĕ пулса ĕçлет. Вăл колхозниксене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа парать. Январĕн 10-мĕшĕнче Гарифуллин юлташ хăйĕн участокĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене государство умĕнчи парăмсене татасси, фронта вăйлăрах пулăшасси çинчен калаçу туса ирттерчĕ. Çакăн хыççăн колхозниксем государство умĕнчи хăйсен парăмĕсене срокченех татма тытăнчĕç, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 23 тир, 7,5 килограмм çăм пуçтарса пачĕç. Кунсăр пуçне, танксем тума 45.750 тенкĕ укça пухрĕç. Хайруллапа Микнулла Галиев колхозниксем 5-шер пин тенкĕ пачĕç, Хĕрлĕ Çар фондне 6-шар пăт тырă хыврĕç.

Агитаторсем Сталин юлташăн приказĕпе докладне колхозниксем патне çитерес тĕлĕшпе уйрăм занятисем туса ирттернĕ. Комсомолец-агитатор Шевкет Сулейманов уйрăмах лайăх ĕçлет.

Агитколлектив руководителĕ пулса Сибай Галиев ĕçлет. Вăл агитаторсем мĕнле ĕçсем туса ирттернине дневник çине çырса пырать. Занятисене ирттернĕ чухне вăл хăй яланах карттăпа усă курать. Кулленхи лару-тăру çинчен колхозниксене карттă тăрăх ăнлантарса парать, час-часах колхозниксем ĕçленĕ çĕрте пулать.

Колхоз авăн çапас ĕçе пысăк пахалăхпа вĕçленĕ. Агитколлектив членĕсем хавхалантарнипе колхозниксем 1943 çулшăн государствăна аванс шучĕпе 40 центнер какай пачĕç.

Агитациллĕ ĕçĕн результачĕсем савăнтараççĕ. 1942 çулта агитколлектив членĕсем калаçусем, докладсем, лекцисем 1011 хут, семинарсем 24 хут туса ирттернĕ.

С. Шадин.

--o--

Районри хаçатсенчен

Оборона гектарĕсем

Çĕньялти (Калинино районĕ) «Правда» колхоз членĕсем Сталин юлташăн приказне сӳтсе-явма пухăннă митингра çитес çуракинче оборона фончĕ валли 1 гектар çуртырри, çур гектар пахча-çимĕç акса хăварма йышăннă.

(«Коммунизм ялавĕ»).

Ют çĕршывсенче

„Вырăссем историри чи аслă çапăçура çĕнтерчĕç“

Америкăри пичет тăшманăн Сталинград патĕнче савăрса илнĕ войскисене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкни çинчен

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Германи войскисен юлашкийĕсене Сталинград патĕнче пĕтерсе тăкни çинчен пĕлтерни Америкăри мĕнпур пичетре тĕп вырăн йышăнса тăрать.

Ассошиэйтед пресс агентстви: Сталинград патĕнчи çапăçу мĕнпур вăрçă ĕçĕсенче çаврăну пункчĕ пулса тăма пултарать, тесе палăртать. Кунта Германи çарĕ чăн-чăн катастрофа тӳсрĕ. Сталинград патĕнчи çапăçу Германи хĕçпăшалĕ халиччен нихăçан та тӳссе курман поражени тӳснипе вĕçленчĕ. Гитлер çав поражени çинчен нимĕçсене ниепле те ăнлантарса пама пултараймĕ. Çав поражени Гитлерăн «вăрçă туйăмĕсем» инкеклĕ пулнине кăтартса парать. Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче тунă çĕнтерӳ — ăна вăрçă ĕçĕсен аслă стратегĕ тата полководец Сталин ертсе пынин результачĕ пулса тăрать. Черчилль Каирти пресс-конференцире Сталина тĕрĕссипех аслă воин тесе хакларĕ. Сталинградшăн пынă кĕрешӳ тĕнчери чи аслă çапăçусенчен пĕри пулса тăрать. Вырăссем çав аслă çапăçура çĕнтерчĕç. Нимĕçсем, паллах, ăнланаççĕ: Германин 330 пин салтакĕпе офицерне Гитлерăн ятне сыхласа хăварассишĕн çухатма лекнĕ. Нимĕçсем çакна курмасăр тăма пултараймаççĕ: вырăссем, Сталин ертсе пынипе, нимĕçсенчен чеерех пулчĕç, нимĕçсене çĕнтерчĕç тата хăйсен вăрçă ĕçĕнчи пысăк ăсталăхне кăтартса пачĕç. Сталинград патĕнчи çапăçу мĕнле вĕçленни, — тенĕ агентствăн пĕлтерĕвĕнче, — нимĕçсен сехрине хăпартма тивĕçлĕ.

Нимĕç войскисене Сталинград патĕнче пĕтерсе тăкнă пирки Германире траур тăвасси çинчен пĕлтернĕ

ЖЕНЕВА, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Германи войскисене Сталинград патĕнче çапса аркатса, пĕтерсе тăкнă пирки мĕнпур Германире траур тăвасси çинчен Берлинра распоряжени пичетлесе кăларнă. Геббельс приказĕ тăрăх, февралĕн 4-мĕшĕнчен пуçласа 6-мĕшне çитиччен хавасланмалли пур учрежденисене те хупмалла тунă.

Англи пичечĕ Черчиллĕн Турцири калаçăвĕсем çинчен

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви: Черчилль Турцие кайни Англири пичете питех те интереслентерсе пăрахнă, тесе пĕлтерет. Хаçатсем пурте ун çинчен кăмăлласа çыраççĕ, çав ятпа ятарласа умстатьясем пичетлеççĕ.

«Таймс» хаçат хăйĕн умстатьинче Черчилль Турци правительствине çав туслă çĕршыва пыма сĕнӳ панине ырлать. «Таймс» хаçат Черчиллĕн сĕнĕвне Турци правительстви çийĕнчех йышăннине кăтартса парать. «Англин премьер-министрĕпе Турци президенчĕ — лăпкă та асăрханулă тата опытлă салтак пĕр-пĕринпе хăйсен шухăшĕсем çинчен тӳррĕнех калаçса татăлма май тупни — вăл хăех ĕнтĕ вырăссен çарĕ тунă çĕнтерӳсем тата союзниксем Вăтаçĕр тинĕс районĕнче туса ирттернĕ ăнăçлă наступлениллĕ операцисем Кăнтăр-Хĕвелтухăç Европăна тата Çывăхри Хĕвелтухăçне мĕнле хавхалану кӳнине кăтартса парать. Çав тĕлпулу çинчен пĕлтернине Англире кăмăлласа кĕтсе илĕç», — тесе çырать хаçат.

«Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат: Аданри калаçусем пуринчен малтан вăрçăри лару-тăрура пулса иртнĕ улшăнусене палăртса тăраççĕ, — тесе çырать. Турци аллинче халĕ ĕнтĕ агрессирен хӳтĕленмелли чылай пахарах майсем пур. Вăрçă тата экономика тĕлĕшĕнчен, — тесе çырать хаçат, — пĕрлешнĕ нацисем тунă çĕнтерӳсем Турцие хăйĕн ĕçĕсене туса пыма чылай ытларах ирĕк параççĕ. Аданри канашлу — Германипе Итали кунçулĕ çине мĕнтери тĕксĕм мĕлке ӳкнине татах та тепĕр хут кăтартса парать, — тесе палăртать хаçат.

«Дейли мейл» хаçат çакна палăртать: Англин премьер-министрĕ вăрçă вăхăтĕнче нейтральнăй çĕршыва кайни питех те паха ĕç пулса тăрать. Аданри калаçусемпе Германире кăмăлсăр пулĕç, шикленсе ӳкĕç. Çав калаçусем политикăллă ыйтусенчен чылай маларах кайни уççăнах куçа курăнса тăрать,—тесе çырать хаçат. Союзлă çĕршывсенче, тăшманла çĕршывсенчи пекех, Аданри калаçусене Англипе Турцин çар ĕçне ертсе пыракан çыннисем хутшăннине уйрăмах пысăк вырăна хураççĕ.

Çурçĕр Африкăри лару-тăру

Иден общинăсен палатинче калани

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден общинăсен палатинче Англи правительстви Çурçĕр Африкăри политикăллă лару-тăру çине мĕнле пăхни çинчен каласа панă. Хăшпĕр профсоюз тата общество организацийĕсем Пейрутона тата Вишин ытти деятелĕсене Çурçĕр Африкăра влаçран пăрса яма, çывăх вăхăтрах унта француз халăхĕ пулăшма пултаракан правительство тума ыйтса резолюцисем йышăннă пулнă. Çакăн пирки Иден çапла каланă:

«Эпĕ çапла каласшăн: Францин Çурçĕр Африки вăл — французсен территорийĕ, Жиро администрацийĕ — французсен администрацийĕ. Ана Франци правительстви темех çук, вăхăтлăх правительство е пулас правительство теме те çук, анчах та Жиро администрацийĕ вăл хальхи вăхăтра Франци империйĕн паллă пайĕсене тытса тăрас ĕçшĕн ответлă пулса тăрать.

Çав территорисене тытса тăрас ĕçĕн тĕп ответлăхĕ французсем çине ӳкет. Англипе Америка правительствисем пуринчен ытла французсен çав администрацийĕ союзниксене Çурçĕр Африкăра вăрçă ĕçĕсене туса тăма пулăштăр тесе тăрăшаççĕ».

Иден çакна палăртнă: союзниксен Çурçĕр Африкăри вăйĕсен главнокомандующине французсен администрацийĕ пур енчен те пулăшса тăрать тата Жиро ертсе пыракан войскăсем Тунисри вăрçă ĕçĕсене активлăн хутшăнаççĕ. Иден çапла каланă: французсем хушшинчи пысăк хирĕçӳсене çăмăллăнах пĕтерме пур тесе шанма çук, анчах апла пулсан та вăл тĕлĕшпе ĕç чылай мала кайнă ĕнтĕ. Де Голль генералпа Жиро генерал Касабланкăра тĕл пулса калаçнă хыççăн пĕрле çырса пĕлтерни тата вĕсем пĕри Лондона, тепри Алжира тавăрăннă хыççăн тунă официальнăй заявленисем çавна лайăх кăтартса параççĕ.

Иден малалла çакна палăртнă: французсене килĕштерес тата Çурçĕр Африкăри шалти ыйтусене йĕркелесе ярас ĕçĕн пуçламĕшне тунă ĕнтĕ. «Чăнах та, тумалли нумай юлать-ха, лару-тăру эпир тăвас тенинчен нумай урăхларах-ха, анчах та пирĕн çакна ăнланса илмелле, — тенĕ Иден: — çак ыйтăва ăна пĕр-пĕринпе килĕшсе çăмăлтарах татса пама пулать. Çак тĕлĕшпе Англипе Америка правительствисен политики хушшинче нимĕнле хирĕçӳ те çук».

Лейборист Шинуэлл Идена çакăн пек ыйту панă: Англипе США çак ыйту çине питĕ тĕрлĕ пăхнине эсĕ пĕлетĕн-и? — тенĕ. Иден çапла ответ панă: «Англипе США ун çине тĕрлĕ пăхнине эпĕ пĕлестĕп. Пирĕн кашнин ыйту çине тĕрлĕ пăхма тулли право пур. Эпĕ палатăран çакна анчах ыйтатăп: французсене пĕрлештерме пур майпа та пулăшмалла», тенĕ.

--o--

Англи авиацийĕ Брикке, Абвиль хулисене тапăнни

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер ирхине Англин бомбардировка тăвакан авиацийĕ 200 истребитель хӳтĕлесе пынипе Брикке çывăхĕнчи (Бельгия) тата Абвильри (Франция) чугунçул çинчи сортировка станцийĕсене тапăннă.

--o--

Пĕлтерӳ

Февралĕн 5-мĕшĕнче, касхине 8 сехетре, Парткабинетăн лекцисем вуламалли залĕнче (Чувашская ур., 6) агитаторсем валли лекци пулать. Лекци теми: «Сталин — Хĕрлĕ Çарăн тата халăхăн çулпуçĕ».

Лекцие лектор А. А. Рассудов вулать.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

ЭПИЛОГ

Сталинградра пирĕн войскăсем юлашки фрицсене шăтăксенчен тĕтĕрсе кăларчĕç. Тыткăна лекнĕ нимĕçсен коллекцийĕ татах та темиçе генералпа пуянланчĕ. Нумай уйăхсем хушши пынă çапăçу хыççăн Сталинградра малтанхи хут ыра шăплăх пулса тăчĕ. «Седан» нумайранпа ĕнтĕ тек-текех асăнакан ят пулнă: пруссаксем çавăрса илнĕ Виççĕмĕш Наполеон çарĕн кунçулне намăсла пораженин тĕслĕхĕ вырăнне илсе кăтартнă. Нимĕçсем Седан çинчен текех ан калаçчăр ĕнтĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсем Сталинград ятне асăнччăр. Нимĕçсен 6-мĕш армийĕ поражени тӳсни Седанран маларах тăрать.

Хăйсен ури сассине илтнипе ӳсĕрĕлнĕ каппайчăк нимĕçсем Атăл патнелле нумай вăхăт хушши талпăннă. Вĕсем Сталинград патне нумай тĕрлĕ техникăна турттарса пынă. «Пирĕн танксем вĕçĕ-хĕррисĕр нумай! Пирĕн ултă кĕпçеллĕ минометсем пур! Пирĕн тĕнчере чи лайăх бомбардировщиксем пур!», тесе кăшкăрнă вĕсем. Германи çарĕн главнокомандующийĕ, хăйне аслă çын тесе шутласа ăсран вĕçерĕннĕ ефрейтор сентябрĕн 30-мĕшĕнче иртĕхсе кайсах çапла суйхашрĕ: «Сталинграда çывăх кунсенчех манăн салтаксем тытса илĕç тесе калатăп эпĕ», терĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл Сталинград çине пăхма пултарать — унăн генералĕсем пĕрин хыççăн тепри тыткăна парăнчĕç. Германин хăватлă техники фрицсене пулăшаймарĕ. Тимĕр хăй çапăçмасть. Тимĕрпе çапăçаççĕ. Пирĕн воинсен кăкăрĕнче — таса вут-кăвар; халĕ ĕнтĕ эпир тытса илнĕ трофейăсене — самолетсемпе танксене, орудисемпе минометсене çĕршерĕн те пиншерĕн шутлатпăр.

Берлин хуйхăпа ăсланмарĕ, вăл тăмсайланчĕ.

Берлинри радио çав йӳçĕ пилюльăна акă мĕнле çăтать: «Пирĕн Сталинградри çар руководстви, вырăссене парăниччен малтан, мĕнпур документсене пĕтерсе тăкрĕ. Çакăнпа вара пирĕн геройсем хăйсене валли памятник тума татах та тепĕр чул катăкĕ хатĕрлерĕç». Шакканă фрицсемшĕн çав памятник питех те аван пулать! Тен вĕсем памятник çине çапла çырса хурĕç: «Тыткăна парăнас умĕн пирĕннисем халăха çаратасси çинчен çырнă приказсене тата вылянчăкрах дневниксене çунтарса янă», тейĕç. Хутсене пĕтерсе тăкма орудисене пĕтерсе тăкассинчен çăмăлрах.

Çунтарса янă хутсем нимĕçсене сахал лăплантарнине туйса, Берлинри радио çапла пĕлтерет: «Сталинградăн çурçĕр пайĕнче пирĕн войскăсем татах та çирĕппĕнрех тăрса çапăçаççĕ». Çакна нимĕçсем радио тăрăх февралĕн 2-мĕшĕнче каланă. Çав вăхăтра Сталинградăн çурçĕр пайĕнче пур тĕрлĕ званиллĕ фрицсем те красноармеецсенчен тимлесех çапла пыра-пыра ыйтнă. «Битте, ăçта кунта тыткăна парăнмалла?»

Кĕркунне Гитлер Сталинграда кирек-мĕнле пулсан та тытса илесшĕн пулнă. Çавăн çинчен вăл канăç курмасăр ĕмĕтленнĕ: çĕнтерӳ ăна тайăнмалли тĕрек пек, стена пек кирлĕ пулнă. Вăл стена çине тайăннă, анчах çав стена ишĕлчĕ. Вăл хăйĕн генералĕсем çине кăшкăрнă: «Тытса илĕр Сталинграда!» Вăл орденсем сапаланă. Итлеменнисене — хăратнă, юнанă. Атăл патне вăл хăйĕн чи лайăх дивизийĕсене хăваласа килнĕ. Сталинградшăн вăл çĕршер те çĕршер пин нимĕçĕн пуçне хуртарнă. Вăл парăнасшăн пулман. Сталинград картран вĕçерĕннĕ ефрейторшăн хăй чапĕн ыйтăвĕ пулса тăнă. Вăл хăйĕн суйласа илнĕ çарне танатана кĕртсе ӳкерчĕ. «Эсир триумфаторсем!» тесе кăшкăрнă вăл хăйĕн салтакĕсене. Анчах халь пăхтăр ĕнтĕ вăл хăйĕн «триумфаторĕсем» çине: танатана лекнĕ çав вĕт-шакăр тискер кайăксем, кăкăрĕсем çине хĕрессем çакнă вăрă-хурахсем—вĕсем мĕскĕн те йĕрĕнчĕк. Пирĕн боец тыткăна лекнĕ генералсем çине пăхать те тăрăхланăн кулкалать: «Вăрçса тăранчĕç!», тет.

Нимĕçсем çавăрса илнине—«хуран» теççĕ. Мĕнех вара, Сталинградăн пысăк хуранĕ вĕресе типрĕ. Анчах нимĕçсен малашне çавăн пек çавăрса илессипе хăнăхма лекет: хурансем, пысăккисем те, пĕчĕккисем те, çителĕклех нумай, вĕсенче кашнинчех фрицсем вĕресе пиçеççĕ. Эпир те халь ĕнтĕ хăшпĕр япалана хăнăхса çитрĕмĕр: эпир халĕ ĕнтĕ нимĕçсене ушкăнăн-ушкăнăн шаккама хăнăхрăмăр, çак ĕçе эпир вĕçнех çитерĕпĕр.

ИЛЬЯ ЭРЕНБУРГ.
(«Красная Звезда», февралĕн 3-мĕшĕ).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 054

Типография №, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф, б. 58. 84 п.